Сăмах – йӗрке хуралҫине

# Выльăхсене сыхласси пӗрлехи ӗҫ пулмалла

Ют ҫын пурлăхне хапсăнакансем ҫӗршыв аталанăвӗн кирек хăш тапхăрӗнче те пулнă. Вӗсем паян та пирӗнтен пит инҫетрех тăмаççӗ. Ҫавăнпа та пӗрлехи тимлӗх кунта тӗп вырăн йышăнни пирки пирӗн самантлăха та манма юрамасть. Ҫакăн чухне кăна эпир хамăра хамăр пурлăхшăн лăпкăлăхра туйма пултаратпăр.

Юлашки ҫулсенче ҫулленех ҫуллахи тапхăрта ял ҫыннисен выльăхӗсем ҫухалнă тӗслӗхсем пулкаларӗҫ. Пытармастпăр, питех те пăшăрхантарать пире ҫакă. Ҫавăнпа та ҫак инкексене ура хурас тесе хамăртан мӗн килнине пӗтӗмпех вăхăтра тума тăрăшатпăр. Ҫакна пула ҫын выльăхне хапсăнакансене пӗрре кăна мар тытса чарса саккун умне тăратрăмăр. Анчах ҫакă лăпланмаллине пӗлтермест-ха.

Юлашки ҫулсенче терӗмӗр те, ҫулленхи кунашкал фактсем ҫинче тӗплӗнрех чарăнса тăрам-ха. 2004–2006 ҫулсенче выльăхсем ҫухалнă тӗслӗхсем район территорийӗнче 38 пулчӗҫ: 2004 ҫулта – 25, 2005 ҫулта – 12, 2006 ҫулта – 1. Кăҫал хальлӗхе кунашкал инкексенчен сыхланма пултартăмăр-ха, анчах хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмасан... Ҫапла пулчӗ те пулас иртнӗ шăмат кун, июнӗн 23-мӗшӗнче, Автанкассинче. Ку тӗслӗхре А. Петров гражданинăн ҫул хӗрне кăкарнă 5 уйăхри пăрăвне вăрласа кайнă. Халӗ ку ӗҫпе следстви пырать. Кунта манăн выльăх хуҫисем хăйсен ответлăхне тивӗҫлӗ шайра тытманни пирки уйрăм калас килет. Ӗнесемпе тынасене, пăрушкасемпе вăкăрсене автоҫулсем хӗррине кăкарнă хыҫҫăн вӗсене нумай вăхăтлăха никам пăхмасăр хăварнине ответлăха туякан хуҫа ӗҫӗ тесе епле калăнха? Ҫу кунӗсенче ҫӗр каҫа сарайсене пачах питӗрменни-хупманни, пахча енчи алăка уҫă хăварни тата хуҫалла хăтланни пулать-и-ха? Ҫук. Ҫаврăнăҫуллăраххисем ҫакăнпа усă кураççӗ те.

Ялсенче каҫхи хуралсем ҫукки те пушар хăрушсăрлăхне чакарассипе пӗрлех вăрăсем валли те ҫул уҫать. Уҫса панă преступленисем вăрăсем кăнтăр кунӗнче ялсене аш туянакансем пек пырса лару-тăрăва тӗрӗслесе кайни курăнать. Вӗсем кăнтăр кунӗнче хăйсен каҫхи ҫул-йӗрне паллă тăваççӗ. Пурте ыйха путсан вара...

Ҫине тăрса ӗҫленипе вăрăсен темӗнле чее утăмӗсене те уҫса пама пулать. Акă 2004 – 2005 ҫулсенче ялсенчен майракаллă шултра выльăхсене вăрлассипе специализациленнӗ 4 ушкăна (пӗтӗмпе 9 ҫын) арестлесе саккунпа айăплама пултартăмăр. Вӗсем Шупашкарпа Ҫӗнӗ Шупашкар хулисемпе Чулхуларан тата Шупашкар районӗнчен. Кунта вӗсенчен сыхланас тесен ҫынсем умне мӗн тумалли ыйту сиксе тухать. Ăнлантарам. Яла палламан ҫынсем сахăр-песук е ытти таварсене сутма пырсан аш-какайпа интересленнинчен асăрханмалла, кун пек ҫынсене хăйсене тата вӗсен автомашина номерӗсене астуса юлмалла та вӗсем ҫинчен ҫийӗнчех шалти ӗҫсен пайне пӗлтермелле. Каҫхи хуралсем йӗркелесен вӗсен ял урамӗсене ҫеҫ мар, пахча хыҫӗсене те тухса пăхмалла.

Ҫынсен ответсăрлăхӗн час-час тӗл пулакан тӗслӗхсене илсе кăтартам-ха.

Кăҫалхи июнӗн 14-мӗшӗнче Турай ял тăрăхӗнчи Анаткасси ялӗнчи пӗр хӗрарăм ӗнине улăха кăкарса хăйӗн ӗҫӗсемпе айккалла пăрăнать. Вӗрен татăлса каять те ҫак ӗне пирки паянччен те хыпар ҫук. Ял ҫыннисем вăл ирӗккӗн ҫӳренине курнă, анчах ҫийӗнчех тивӗҫлӗ мерăсем йышăнман. Унччен эрне маларах Актай ял хӗрарăмӗ пирӗн пата ӗнепе пăру ҫухални пирки пӗлтерчӗ. Вӗсем кун каҫа ирӗккӗн ҫӳренӗ-мӗн. Шырав йӗркелесен вӗсене Йӳҫкасси сӗт ферминче ӗҫлекенсем хăйсем патӗнче тупса пачӗҫ.

Шалти ӗҫсен пайӗ ҫынсем ыйтнипе ҫийӗнчех тивӗҫлӗ мерăсем йышăннипе пӗлтӗр авă Йӳҫкассинче кăкарнă ҫӗртен вӗрен татса кайнă лашана 3 кунтан Элӗк районӗнче шыраса тупрăмăр. Ҫавнашкалах пӗлтӗр Москакассинче пӗрлешӳллӗ хуҫалăх ӗни ҫухални те тимлӗхе хамăрăн ӳстермелли пирки калать. Ку хутӗнче ҫухалнă ӗне ферма территорийӗ хыҫӗнчи курăксем хушшинчи хуҫасăр канализаци шăтăкне кӗрсе ӳкни паллă пулчӗ, ӗнене ҫийӗнчех пусса тирпейлеме тиврӗ.

Ҫынсен тимлӗхӗ ҫӳллӗ шайра пулни преступление хăвăрт уҫса пама пулăшнă тӗслӗхсем кăҫал кăна иккӗ пулчӗҫ. Июнӗн 19-мӗшӗнче Чулхула облаҫӗнче пурăнакан ҫын Мăн Тутаркассинче хур вăрлать. Ҫакна ҫийӗнчех асăрханă кил хуҫисем вăрăна вырăнтах тытса чараççӗ. Унччентерех Ҫатракасси ял тăрăхӗнчи Ятман тата Ҫатракасси ялӗсенче, Турай ял тăрăхӗнчи Анаткасси ялӗнче цыгансем ҫӳресе 4 хутчен хурсемпе чăхсене вăрланă. Вӗсен ҫул ҫӳревӗ сисчӗвлентернӗрен ял ҫыннисем шалти ӗҫсен пайне шăнкăравласа пӗлтерчӗҫ. Мӗн тетӗр, ҫийӗнчех йышăннă оперативлă ӗҫсемпе преступниксене Хӗрлӗ Чутай район территорийӗнче тытса чарма май килчӗ.

Ял хуралӗсен анкартисем хыҫне тухса пăхмалла тенӗрен. 2005 ҫулта Шомикра тата Кӳстерекре ӗнесене ҫӗрле пахча урлă илсе тухса ҫырмапа вăрласа кайнă тӗслӗхсем пулнăччӗ. Ҫак ҫулхинех Мускав – Хусан федераллă ҫул хӗрринче ӗнесене ҫӳретекенсем е унта кăкаракансем выльăхсемсӗр юлнă тӗслӗхсем пулчӗҫ. Каламалла, ҫак преступлени ҫулӗ ҫине тăнисене выльăхсене ҫывăхри йывăҫсем хушшине илсе кӗрсе пусса тирпейлеме ҫур сехет ҫеҫ вăхăт кирлӗ. Ҫавăнпа та асăрханулăх ҫу кунӗсенче кашнин ҫӳллӗ шайра пулмалла. Хамăр енчен ҫак преступленисен ҫулне пӳлес тӗллевпе кăҫал пӗрлешӳллӗ хуҫалăхсен ертӳҫисемпе, вырăнти ял тăрăхӗсен пуҫлăхӗсемпе, ялти депутатсемпе тачăрах ӗҫлени кăҫал ку инкексенчен пăрăнма май пачӗ-ха. Хальлӗхе. Малалла та пӗрлехи тимлӗхе чакарас марччӗ.

**Е. ПЛЕЧОВ, районти криминаллă милици пуҫлăхӗ.**

**Июнӗн 26-мӗшӗ – Наркоманипе тата саккуна пăсса наркотиксемпе сутă тăвассипе кӗрешмелли пӗтӗм тӗнчери кун**

## Ҫитӗнекен ҫамрăк ăрăва наркомани серепине лектерес марччӗ

Юлашки ҫулсенче наркотиксен сиенӗ пирки час-часах калаҫма пуҫларӗҫ. Ҫакă, паллах, сăлтавсăр мар. Уйрăмах ҫул ҫитмен ҫамрăксен наркотиксемпе усă курса наркотик серепине лексе унăн авăрне путасран асăрханмалла.

Мӗн-ха вăл наркотик? Наркотик тесе ҫынна психологи тӗлӗшӗнчен улăштарма усă куракан препаратсене калаççӗ. Вăл уйрăмах аталанса, ăс-тăн тӗлӗшӗнчен ҫирӗпленсе ҫитеймен ҫул ҫитмен ҫамрăксен пуҫ мимине пысăк сиен кӳрет. Ҫавăнпа та кашни ашшӗ-амăшӗн ҫитӗнекен ачи ҫине куллен тимлӗх уйăрмалла, вăл наркотиксен серепине лекесрен сыхламалла. Паллах, ача малтан наркотик «тутанса» пăхнине тӳрех сисме йывăр. Ҫул ҫитмен ҫамрăк наркотиксемпе усă курма тытăннине, ăна сăнасан, нумай сăлтавсенчен пӗлме пулать:

– алăсенчи юн тымарӗсенче укол тунă йӗрсем пулни – тӗп паллăсенчен пӗри;

– куҫ шăрҫисем сарăлни е пӗчӗкленсе кайни;

– пытарса хунă шприцсене, пӗлмен эмелсене, тӗтӗмленӗ кашăк-тирӗк тупни те асăрханмалли ҫинчен калать.

Наркотиксемпе усă куракан ҫамрăк час-часах телефонпа е ҫынпа калаҫнă чухне хăйне вăрттăн, асăрханса тытать, ача япăх вӗренме пуҫлать, кӗнеке вуласси е музыка итлесси тата ытти те ҫухалса пыраççӗ. Ҫав вăхăтрах право йӗркине те пăсма пултараççӗ: ача вăрлама пуҫлать, килтен укҫа, хаклă япаласем ҫухалаççӗ.

Ача ашшӗ-амăшӗнчен тарса ҫӳрет, ҫемьери ӗҫсене хутшăнмасть, аппетит ҫук пирки начарланать, шуралса каять, чӗлхе хăмăрланать, ача тумтирӗнчен ăнланмалла мар шăршă кӗрет. Енчен те ачăр ҫӗнӗ туссем тупрӗ пулсан, вӗсем хăйсене мӗнле тытнине сăнăр, вӗсем мӗн ӗҫленине, татуировкăсем пуррипе кăсăкланăр.

Паллах, ҫак паллăсем уйрăмшарăн нимӗнле хăрушлăх пирки те каламаççӗ. Апла пулин те хăвăрăн ачапа (енчен те сире мӗн те пулин иккӗлентерет пулсан) лăпкăн калаҫни пăсмасть, хăвăр ăна юратнине, уншăн пăшăрханнине пӗлтерӗр. Чи кирли вăл сирӗншӗн – наркотикпа аташни йăлана кӗнине пӗлесси. Йăлана кӗнӗ пулсан вăл хăрушă чир патне илсе пырать.

Юлашкинчен вара ҫакна хушса калас килет. Тархасшăн, ан туслашăр наркотикпа!

**В. ЕВДОКИМОВА, наркологи пӳлӗмӗнчи медицина сестри.**

## Петр Павлович ТАРАСОВ



2007 ҫулхи ҫӗртме уйăхӗн 15-мӗшӗнче 50 ҫула кайса хăйӗн ӗҫ ӗмӗрне инженери службине аталантарас ӗҫе халалланă, ку тӗлӗшпе курăмлă ӗҫсем туса ирттернӗ пирӗн ҫывăх юлташăмăр тата ӗҫтешӗмӗр Петр Павлович Тарасов пирӗнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрӗ.

П. П. Тарасов 1958 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗнче Юнкă ялӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнă. Ашшӗ Павел Ильич, хуҫалăхсем хушшинчи куҫса ҫӳрекен "Моргаушская" строительство организацийӗнче нумай хушă водительте ӗҫленӗскер, ывăлне ачаранах техникăпа туслаштарнă. Ҫакă палăртнă та ӗнтӗ Петр Павловичăн пуласлăхне. Юнкăри вăтам шкула 1975 ҫулта ăнăҫлă вӗренсе пӗтерсен П. Тарасов ҫирӗпленнӗ шухăшӗмӗтпе Чăваш ял хуҫалăх институтӗн инженери факультетне вӗренме кӗрет. 1980 ҫулта алла диплом илсе П. Тарасов "Новая Юнга" колхоза таврăнса ӗҫ ӗмӗрне пуҫлать. Икӗ ҫул кунта трактор бригадин бригадирӗнче вăй хунăскере тата ӳсӗмлӗ ӗҫленӗскере 1982 ҫулхи сентябрьте Муркашри комсомол райкомне организаци пайӗн заведующине ӗҫлеме илеççӗ. Кунта та хастарлăх кăтартнă ҫамрăк 1983 ҫулхи апрель–октябрь уйăхӗсенче Муркаш райповӗн техника ыйтăвӗсемпе ӗҫлекен ҫумӗнче ӗҫлет. Ҫак ҫулхи октябрьтен пуҫласа Петр Павлович 1989 ҫулхи декабрьччен "Новая Юнга" колхозра гараж заведующийӗнче, машинăпа трактор паркӗн инженерӗнче вăй хурать, хăй хыҫҫăн ырă ят кăна хăварать.

Ӗҫре тăтăшах ҫӗннине шыракан Петр Павлович Тарасова 1990 ҫулта "Моргаушагропромснаб" предприятири инженери службине шанса параççӗ. Ҫӗнӗлӗхсем вăй илме пуҫланине кура тӗп инженера 1997 ҫулта предприятие ертсе пыма шанаççӗ. Хăй ӗҫне ăста пӗлекен специалист рынок хутшăнăвӗсенче ҫӗнӗлле ӗҫлеме кирлине тата ҫав ҫӗнӗлӗхсен ҫулне тупать те предприятие налуксен авăрӗнче путма памасть, районти пӗрлешӳллӗ хуҫалăхсемпе пӗр чӗлхе тупса аталану ҫулне якатать, ҫӗнӗ тӗллевсем палăртать.

Ашшӗн техника юратăвне район шайне ҫӗклеме пултарнă тата "Моргаушагропромснаб" МУП аталанăвӗн ҫирӗп никӗсне хывса хăварнă Петр Павлович Тарасов сăнарӗ пирӗн тата ăна пӗлекенсен асӗнче яланах ҫуттăн ялкăшса тăрӗ.

**"Моргаушагропромснаб" МУП коллективӗ.**

Вулакан ыйту хускатать

## Палăксем вырăнӗнче кăна

Кашни ялăн хăйӗн илемӗ, уйрăмлăхӗ пур. Кӗртекассинче те курса тӗлӗнмелли чылай. Вӗсенчен хăшӗсем – урамра вырнаҫтарнă шыв колонкисем. Тинех хаш! сывласа янăччӗ ял ҫынни вӗсене вырнаҫтарнă чухне. Ара, аякран шыв ҫӗклесе асапланасси тенех пӗтет вӗт-ха. Анчах ҫак ырлăх нумайлăха пымарӗ ҫав. Майӗпен шыв пăрăхӗсем тутăхса пӗтрӗҫ, колонкăсенчен те шыв пăт-пат куҫҫуль пек кăна сăрхăнма тытăнчӗ. Ял пуҫӗнчи икӗ шыв башни хуҫасăрлăх палăкӗсем вырăнне юлчӗ. Шыв вара ял ҫыннисене кирлех.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

## Тав сăмахӗ

Мăн Сӗнтӗрти 2-мӗш номерлӗ район больницинче неврологи уйрăмӗнче ӗҫлекен Юрий Михайлович Трофимова тата кунти массажисткăна Светлана Васильевна Беловăна, ҫутăпа сыватнă ҫӗрте ӗҫлекен Валентина Аркадьевна Григорьевана хăйсен ӗҫне пӗлсе, чунӗсене парса пурнăҫланăшăн, чирлисемпе ялан кăмăллă пулнăшӗн ҫӗре ҫити пуҫ тайса тав тăватăп. Вӗсен ӗҫӗсем ялан ăнса пыччăр.

**Галина ИГНАТЬЕВА.**


## Пӗлтерӳсем. Объявления

**ООО Чебоксарской макаронно-кондитерской фабрике "Вавилон" на постоянную работу требуются:**
**- упаковщицы кондитерских изделий (женщины, сан.книжка) – з/п 4000 руб.;**
**- операторы кондитерской линии (муж., сред.технич.образ.) -з/п 7000 руб.;**
**- сушильщики-упаковщики макаронных изделий (муж., сан.книжка) - з/п 5000 руб.**
**Обращаться по адресу: г.Чебоксары, ул. Урукова,17**
**Телефон отдела кадров: 45-39-81.**

**Сӗт-ҫу заводне хирӗҫ вырнаҫнă йышăну пунктӗнче ӗне-выльăх тата сурăх тирӗсене хаклă хакпа йышăнаççӗ. Тата сурăх-така туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 2-3.**

**Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.**

**Продается автомобиль марки ВАЗ-2103 на запасные части. Можно целиком. Документы есть. Цена договорная. Тел.: 8-917-670-45-27, 2-25-16, Артур.**

**Продаю новые роторные косилки КРР-1,9 и на трактора Т-25. Заводские цены. Тел: 8-927-861-93-85.**

**Срочно требуются рабочие для работы в личном подсобном хозяйстве (откорм свиней). Заработная плата 3000 руб в месяц.**
**Тел.: 2-13-77, 8-927-854-96-32.**

**Продаю корову черного цвета.**
**Адрес: д. Ятманкино, ул. Центральная. 12.**

**Срочно требуются на работу в Москву, Московскую область кровельщики, каменщики, штукатуры. Заработная плата высокая. Тел.: 8-909-681-71-81, Петр.**

**Продаю пиломатериалы хвойной породы: кровельная - 2650 руб., половая - 2750 руб.; березу: кровельная - 1950 руб., половая - 2350 руб. Готовую продукцию: оконные блоки, вагонка (липа, осина), полог, наличник, плинтус, блок-хаус. Тел.: 8-905-373-11-70. 1-2.**

**ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:**



**- упитанных быков, телок, коров в живом виде;**



**Телефон для справок: 60-662, 8-9603051597 звонить в любое время суток. Герман. 1-3.**


Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование главному агроному отдела сельского хозяйства Павлову А.И. по поводу скоропостижной кончины отца

**ПАВЛОВА**
**Ильи Павловича.**

Отдел сельского хозяйства администрации Моргаушского района, райком профсоюза работников АПК, коллеги по работе выражают глубокое соболезнование главному агроному Павлову А.И. по поводу скоропостижной кончины отца

**ПАВЛОВА**
**Ильи Павловича.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийӗ хуҫалăхра нумай ҫул хушши Йӳтӗркасси ферминче вăкăрсем пăхнă ҫӗрте вăй хурса ӗҫленӗ

**Мария Георгиевна**
**БЕЛОВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн ҫывăх тăванӗсемпе пӗрле чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтерет.

Сосновкăри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул коллективӗ кунта кӗҫӗн классене вӗрентекен А.И. Белован

**АМĂШӖ**

нумай хушă чирлесе выртнă хыҫҫăн вилсе кайнă пирки унăн ҫемйипе тата ҫывăх тăванӗсемпе тарăннăн хурланса пӗлтерет.


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ҪӖНТЕРӲ ЯЛАВӖ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Заместитель главного редактора**
**В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3511**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану ҫулӗпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 26.06.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.